23-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ИЮНЬ 24 ЮНКУН 145(6080) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Отечественнăй вăрçăн çулталăк хушшинчи политикăллă тата вăрçă тĕлĕшĕнчи итогĕсем

ССР Союзĕ çине 1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче ултавлăн килсе тапăннă гитлерла Германие хирĕç Совет Союзĕнчи халăхсем ирĕклĕхлĕ отечественнăй вăрçă туса пыни çулталăк тултарчĕ. Вăрçăн çулталăк хушшинчи политикăллă тата вăрçă тĕлĕшĕнчи итогĕсем мĕнешкел-ха?

Пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнма хатĕрленсе, гитлерла заправилăсем ССР Союзне хирĕç пĕтĕмĕшлĕ коалици тума, çав коалицие Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене хутшăнтарма, çапла майпа вара ССР Союзне тĕнчери ытти державăсенчен пĕтĕмĕшпех татса уйăрма пултаратпăр тесе чăнласах шанса тăнă.

Нимĕçсен çарĕ Совет çĕршывĕ çине ултавлăн килсе тапăначчен нумай мар малтан радио тăрăх та, пичетре те Англипе Америкăри «плутократсене» чи киревсĕр сăмахсемпе вăрçакан гитлеровецсем шăпах çав «плутократсем» патне пуриншĕн те паллă пулса тăракан Гесса янă. Гессăн задачи Великобританипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен политикĕсене «хĕрлĕ хăрушлăх» çинчен калакан юмахпа хăратасси тата çав çĕршывсен ертсе пыракан çыннисене ССР Союзне хирĕç «хĕреслĕ похода» явăçма ӳкĕте кĕртесси пулнă. Гитлерла ушкăн çавăн пек хăтланнинчен мĕн тухрĕ-ха ĕнтĕ? Гитлеровецсем пирĕн çĕршыва тĕнчери ытти державăсенчен татса уйăрма ĕмĕтленни пушă сăмах кăна пулчĕ. Англипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем ССР Союзне хирĕç похода хутшăнмарĕç. Кунтан та ытларах Великобританипе союз тăвас вырăнне, гитлерла Германипе Великобритани хушшинчи вăрçă çивĕчленсе кайрĕ тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Германие хирĕç вăрçа тухрĕç. Великобритания, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем тата ССР Союзĕ фашистла Германие хирĕç тăракан ирĕклĕхе юратакан халăхсемпе пĕр лагерьте пулчĕç. ССР Союзĕпе Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи боевой туслăх вăрçă пынă май ӳссе çирĕпленсе хăватлă вăй пулса тăчĕ. Майăн 26-мĕшĕнче Лондонра ССР Союзĕпе Великобритани хушшинче договор тунни тата ССР Союзĕпе США Правительствисем хушшинче июнĕн 11-мĕшĕнче Вашингтонра тунă килĕшĕве алă пусни гитлерла Германие пĕтĕмпех çапса аркатас вăхăта çывхартать. Халĕ ĕнтĕ çакă паллă пулса тăчĕ, В. М. Молотов Великобританин премьер-министерĕпе У. Черчилльпе тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президенчĕпе Ф. Рузвельтпа калаçнă чухне Европăра 1942 çулта иккĕмĕш фронт туса хумалли ниепле те кая хăвармалла мар задачăсем тĕлĕшпе тĕплĕн калаçса татăлнă.

Гитлерăн ирĕклĕхе юратакан халăхсене пĕчченшерĕн çапса аркатма хапсăнакан ултавлă политики яланлăхах тата пуçĕпех путланса ларчĕ. Гитлерăн çав политики фашистла Германие хирĕç хăйсен аллинче çынсен, производствăпа чĕртаварсен тата продовольстви çавтери хăватлă ресурсĕсене тытса тăракан çĕршывсене пĕр коалицие пĕтĕçтерчĕ, çав ресурссене пула çак коалици никам çĕнтерейми коалици пулса тăрать.

Хĕрлĕ Çарăн тылĕ тĕлĕшпе гитлеровецсем тунă шутсемпе плансем те çавăн пекех арканса кайрĕç. Пĕр çул каярах преступленилле вăрçăн çĕнĕ авантюрине пуçласа ярса, гитлеровецсем Совет Союзĕн тылĕ çирĕп мар пулассине шаннă тата, Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенчи пекех, пирĕн çара шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен аркатса яма, пирĕн çарăн тылне шалтан ишĕлтерме, çапла майпа вара Совет Союзĕ хирĕç тăрассине хавшатма пултаратпăр тесе шутланă. Анчах та, гитлерла заправилăсем татах йăнăшрĕç. Хĕрлĕ Çарăн вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче вăхăтлăха пулнă ăнăçсăрлăхĕсем, çавăн пекех тата нимĕç оккупанчĕсене хирĕç малалла кĕрешсе пыни ССР Союзĕнчи рабочисемпе хресченсен, интеллигенцин союзне тата халăхсен туслăхне татах та ытларах çирĕплетрĕç.

ССР Союзĕнчи халăхсенчен пĕринчен те нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем хăйсене валли пулăшу тупаймарĕç тата вĕсем нимĕнле пулăшу та тупма пултарайман. Совет Союзĕнчи халăхсем хăйсен тăван çĕршывĕшĕн шанчăклă пулса юлчĕç.

Гитлерла авантюристсем çапла шутланă: вăрçă пуçлансанах колхоз стройĕ ишĕлме пуçлĕ, хресченсем рабочи класпа совет влаçне хирĕç тухĕç, тенĕ. Гитлеровецсем çавăн пек ĕмĕтленнинчен нимĕн те тухманнине халĕ ĕнтĕ пĕтĕм тĕнче пĕлет. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан вăрçăн çулталăкĕ никам сирсе ямалла мар çакна çирĕплетсе парать: пирĕн хуçалăхăн социализмла организацийĕ, çавăн пекех пирĕн пĕтĕм совет стройĕ, политикăллă тата çар тĕлĕшĕнчи организацийĕ вĕсем çине вăрçăн çулталăкĕ хушшинче ӳкнĕ йывăр испытанисене чыслăн тӳссе ирттерчĕç, çав испытанисен вут çулăмĕнчен татах та ытларах çирĕпленсе, тĕреклене тухрĕç. Вăрçăн çулталăкĕ çавăн пекех тата совет государствин политики иксĕлми тĕрĕс пулнине кăтартса парать. Фашистсем пирĕн çĕршыв çине килсе тапăнма пултарасси çинчен совет государстви нихăçан та манман, çавăнпа та вăл агрессипе реакци вăйĕсене хирĕç ирĕклĕхе юратакан халăхсен пĕрлĕхлĕ фронтне тăвассишĕн пĕр пăркаланмасăр кĕрешнĕ, Совет Союзĕн промышленноçĕпе ялхуçалăхне, наукипе культурине пĕтĕм вăйсемпе средствăсене хурса ӳстерсе пынă, çапла майпа пирĕн тăван çĕршывăн оборонăллă вăйхăватне тĕреклетсе пынă.

Çапла ĕнтĕ, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра пулса пыракан вăрçă çĕсем Германи империализмĕн политикăллă планĕсем — ССР Союзне çарпа политика тĕлĕшĕнчен пĕччен тăратса хăварма ĕмĕтленнисем тата совет тылĕ çирĕп мар пулассине шанса тănисем пĕтĕмĕшпех путланса ларнине кăтартса пачĕç. Вăрçăн пĕр çулталăкĕ иртнĕ хыççăн, ССР Союзĕпе Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи боевой туслăх çирĕпленчĕ, Хĕрлĕ Çарăн тылĕ çирĕпленчĕ, рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин союзĕ çирĕпленчĕ, ССР Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ çирĕпленчĕ.

Вăрçăн çулталăк хушшинчи политикăллă итогĕсем çакнашкал ĕнтĕ.

Вăрçăн çулталăк хушшинчи вăрçă тĕлĕшĕнчи итогĕсем те нимĕçсемшĕн çавăн пекех хуйхăллă пулса тухрĕç.

Совет Союзне хирĕç захватчикла вăрçă пуçласа ярса, нимĕç империалисчĕсем Хĕрлĕ Çара уйăх çурă—икĕ уйăх хушшинче «пĕтерсе тăкма» пултаратпăр тесе шутланă. Анчах кунта та вĕсем йăнăш турĕç. Вăрçă—вăраха каякан вăрçă пулса тăчĕ.

Фашистла Германия Совет Союзне хирĕç туса пыракан вăрçă нимĕç войскисемшĕн ăнăçлă условисенче тата совет войскисемшĕн ăнăçлă мар условисенче пуçланчĕ. Вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче Гитлерăн çарĕ, вăл ССР Союзĕ çине кĕтмен çĕртен тата ултавлăн килсе тапăннă пирки, хăйне валли вăхăтлăха Хĕрлĕ Çартан кăштах ăнăçлăрах лару-тăру туса хучĕ. Çав ăнăçлăрах лару-тăру вăл çакăнта пулчĕ: фашистла Германия, пирĕн çĕршыва хирĕç вăрçа вăрттăн хатĕрленсе, хăйĕн мĕнпур хуçалăхне малтанах фронт валли ĕçлеттерме тытăннă, танксемпе авиаци хисепне пирĕннинчен ытларах туса хунă. ССР Союзне хирĕç вăрçă пуçланă тĕле нимĕçсен çарĕ йăлтах мобилизациленнĕ пулнă. Çав вăхăтрах унăн танксемпе, авиаципе, автоматхĕçпăшалсемпе, нумай йышлăн усă курса ку чухнехи вăрçа туса пырас тĕлĕшпе тивĕçлĕ опыт пулнă, çав опыта вăл Польшăна, Бельгие, Франције, Греције, Югославие хирĕç вăрçнă çĕрте туяннă. Çавăнпа та паллă ĕнтĕ, вăрçăн малтанхи уйăхĕсенче Хĕрлĕ Çарăн Совет территорийĕн пĕр пайне хăварса каялла чакмалла пулчĕ. Анчах та каялла чакса пырса, Хĕрлĕ Çар тăшман вăй-хăватне хавшатса пынă, тăшмана хыттăн пыра-пыра çапнă. Пулса пыракан çапăçусенче Хĕрлĕ Çарăн командирĕсем, рядовой боецĕсем пиçĕхсе тĕрекленчĕç, опыт туянчĕç, тăшманăн тактикине вĕренсе пычĕç, тăшманăн техникине хирĕç кĕрешмелли майсене тупса пычĕç.

Çапла пулса пычĕ ĕç 1941 çулти ноябрьччен.

Ноябрьте Мускав патне пымалли çывăх вырăнсенче хаяр çапăçусем пуçланса кайрĕç. Гитлер Мускав çине хăйĕн суйласа илнĕ войскисен вуншар дивизийĕсене, вăл шутра нумай танковăй дивизийĕсене ячĕ. Хĕрлĕ Çарăн войскисем, активлă оборона туса пырса, тăшмана юн тăктарса, халран ярса пычĕç, ăна çавтери пысăк çухатусем кӳчĕç, декабрĕн пуçламĕшĕнче вара Хĕрлĕ Çарăн войскисем хăйсем контрнаступление куçрĕç. Çав тапхăр вăрçă ĕçĕсенче перелом тунă **тапхăр пулса** тăчĕ.

Гитлеровецсем Мускавшăн пынă çапăçура арканса кайрĕç. Совет войскисем Гитлерăн вуншар дивизийĕсене çапса аркатрĕç, нимĕç захватчикĕсене Хĕвеланăçнелле сирсе ывăтрĕç, халăх пурăнакан пиншер пунктсене ирĕке кăларчĕç.

Гитлерла командовани, хĕллехи уйăхсенче окопри позицилле вăрçă туса пырса, çапăçусенчен канма шутланă. Гитлерла командовани хĕллехи уйăхсем хушшинче хăйĕн арканнă войскисене йĕркене кĕртме, вĕсене çĕнĕлле йĕркелеме, вĕсене çынсемпе техника хушса пама шутланă, юлашкинчен тата, çĕнĕ вăйсем пухса çуркунне пысăк наступлени пуçласа ярас тесе, хăйĕн войскисене кантарма шутланă. Хĕрлĕ Çар нимĕç командованийĕн çав стратегиллĕ планне аркатса ячĕ. Декабрьтен пуçласа март уйăхĕччен, Хĕрлĕ Çар пуçарулăха хăй аллине тытса илсе, гитлеровецсене хĕллехи вăхăтра çапăçтарса халран ярса пычĕ, çав вăхăт хушшинче Хĕрлĕ Çар нимĕçсен салтакĕсемпе техникине çавтери нумай пĕтерсе тăкрĕ, нимĕçсене çуркуннепе çуллахи вăхăтсенчи операцисем валли хатĕрленĕ резервĕсене инçетри тылран илсе килтерсе вăхăтсăрах пĕтерсе тăкмалла турĕ. Хĕллехи питех те йывăр условисенче Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисене çавтери хăватлăн пыра-пыра çапрĕ, çавăн пек çапнине пула нимĕçсен вăрçă машинин никĕсĕ кисренчĕ тата çакă вăл Гитлерăн çарне 1942 çулта çапса аркатма май туса пачĕ.

Çуркуннехипе çуллахи операцисем валли нимĕçсен командованийĕ, паллах, хăйĕн çарне чылай çĕнетрĕ, вăл хăйĕн çарне хăшпĕр таран çынсем тата материалсем хушса пачĕ. Анчах çакна тума гитлерла пуçлăхсен хĕçпăшал тытма пултаракан çынсен юлашкисене пĕтĕмпех шăпăрпа шălса пуçтарса илмелле пулчĕ, çав шутрах çар валли юрăхлă мар, сывлăх енчен пысăк çитменлĕхлĕ çынсене те илмелле пулчĕ. Хĕл вăхăтĕнче Гитлерла командовани нимĕç халăхне çуркунне Хĕрлĕ Çара хирĕç «татăклă» наступлени пуçласа яма пулса темиçе хут та сăмах пачĕ. Çуркунне иртрĕ, анчах нимĕç çарĕн нимĕнле татăклă наступленийĕ те пулмарĕ.

Паллах, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронт пек питех те вăрăма тăсăлса выртакан фронтра гитлерла командовани, уйрăм участоксенче ытларах войскăсене, танксене тата авиацие пĕтĕçтерсе тăратса, хăшпĕр ӳсĕмсем тума пултарать-ха. Çапла пулчĕ, сăмахран, Керчь перешеекĕ çинче. Унта нимĕçсем, танксем тата уйрăмăнах авиацие ытларах пухса тăратса ӳсĕм тума тата пирĕн войскăсене чакарма пултарчĕç. Çакăн пек ӳсĕмсене нимĕçсем фронтăн уйрăм участокĕсенче килес çывăх вăхăтсенче те тума пултараççĕ. Анчах çакă вара уççăнах паллă: Керчь перешеекĕ çинчи ӳсĕмсем пек ӳсĕмсем вăрçă кунçулне пачах та татса памаççĕ. Çак ӳсĕмсем вăхăтлăха тунă ӳсĕмсем çеç пулса тăраççĕ. Нимĕçсен 1942 çулти çарĕ вăл — вăрçă пуçламĕшĕнче пулнă çар мар. Нимĕçсен суйласа илнĕ войскисене, тĕпрен илсен, Хĕрлĕ Çар çĕмĕрсе тăкнă. Офицерсен кадровăй составĕн пĕр пайне Хĕрлĕ Çар пĕтерсе тăкнă, тепĕр пайĕ вара, оккупациленĕ районсенчи граждăнла халăха çаратнине тата асаплантарнине пула, пăсăлса кайнă. Командирсен кĕçĕн составĕ, правило пекех, вилсе пĕтнĕ, халĕ ĕнтĕ вĕрентсе хатĕрлемен салтаксенчен массăллă йĕркепе кĕçĕн командирсем хатĕрлеççĕ. Халĕ нимĕç çарĕ иртнĕ çулти пек анлă масштабпа наступленилле операцисем тума пултараймасть. Çакна ĕнтĕ нимĕç çарĕн çухатăвĕсем çинчен калакан даннăйсем пуринчен те ĕненмеллерех каласа параççĕ. Акă вăл даннăйсем:

	Германия	СССР
Вăрçăн çулталăкĕ хушшинче çынсем вилсе, аманса тата тыткăна лексе пĕтни	10 мил. çынна яхăн	4,5 мил. çын
Вăрçă çулталăкĕ хушшинче орудисем пĕтнĕ	30.500 ытла	22.000
Танксем пĕтнĕ	24.000 ытла	15.000
Самолетсем пĕтнĕ	20.000 ытла	9.000

Нимĕç çарĕ çухатнă çынсен пĕтĕм хисепĕнчен 3,5 миллион çынран кая мар вилнисем шутланаççĕ. Кунсăр пуçне, ыйтăва тĕплĕн тĕпчесе вĕренни çакна кăтартса пачĕ: Хĕрлĕ Çарта санитари службине лайăх йĕркеленине пула, тӳрленсе строя таврăннă çынсен хисепĕ аманнисен пĕтĕм хисепĕн 70 процентĕ чухлĕ пулнă, нимĕç çарĕнче вара, «çиçĕм пек хăварт» вăрçă тума шутласа, санитари службине ниме юрăхсăр йĕркеленине пула, нимĕçсен аманнă салтакĕсем аманнисен пĕтĕм хисепĕн 40 проценчĕ чухлĕ çеç строя таврăннă.

Çапла вара, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри вăрçăн çулталăкĕ Германи империализмĕн вăрçă планĕсем пĕтĕмĕшпех путланса ларнине кăтартса пачĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ вăрçă çулталăкĕн вăрçă тĕлĕшĕнчи итогĕсем.

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнă пирки нимĕçсен фашистла войскисем тунă тӳрлетме çук çухатусем нимĕç салтакĕн тата уйрăмăнах нимĕç халăхĕн çĕнтерӳ пулас шанчăкне çухатрĕç, вĕсем Гитлерла тата фашистла командование шанса тăрассине хавшатрĕç. Нимĕç салтакĕсемпе нимĕç халăхĕ çакна асра тытаççĕ: Гитлер 1941 çултах тĕтăклăн çĕнтерме тата вăрçа пĕтерме сăмах панă вĕт-ха. Вăрçă 1942 çулта пĕтмерĕ, çĕнтерӳ çук. Апла пулсан, Гитлер пире улталарĕ — акă мĕн çинчен ĕнтĕ нимĕç çынни часрах та часрах шухăшла каять.

Гитлерпа унăн тарçисем 1941 çулти октябрьте: Хĕрлĕ Çара пĕтерсе тăкнă, вăл ĕнтĕ текех нихăçан та хăйĕн вăйне тепĕр хут пухса çитереймĕ, хĕвелтухăçĕнчи поход ыйтăвне татса панă, тесе каланисене нимĕç салтакĕсемпе халăхĕ асра тытаççĕ. Анчах ĕç урăхла пулса тухрĕ: Хĕрлĕ Çар хăйĕн вăйĕсене сыхласа хăварчĕ тата хĕвелтухăçĕнчи поход пĕтмерĕ. Апла пулсан, Гитлер пире улталарĕ — акă мĕн çинчен ĕнтĕ нимĕç çынни часрах та часрах шухăшла каять. Пĕтĕм тĕнче умне, çав шутрах нимĕç халăхĕ умне те Гитлер ирсĕр мухтанчăк тата ултавçă пулса тухса тăчĕ. Нимĕçсем халĕ çакна курмасăр тăма пултараймаççĕ: фашистла пропаганда пĕр чарусăр улталакан пропаганда пулса тăрать, Гитлерăн пĕр сăмахне те, вăл тума пулнă пĕр ĕçе те ĕненме юрамасть.

Гитлерла ушкăнăн авантюристла политикишĕн нимĕçсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра миллионшар çынсен пурнăçĕпе тӳлеççĕ. Нимĕç халăхĕ Германия пурпĕрех поражени тӳсессине ытларах та ытларах ăнланса пырать. Нимĕç çарĕн тылĕ пур çĕвĕсем тăрăх та çурăлма пуçлать. Империалистла Германия ССР Союзĕ çине ултавлăн тапăннă кун, пирĕн халăхсене чуралантарас тата вĕлерсе пĕтерес тесе, пирĕн тăван çĕршыва тытса илсе çаратса пĕтерес тесе тапăннă кун — гитлерла Германия пĕтсе ларассин пуçламĕш кунĕ пулса тăчĕ. Çакна вăрçă çулталăкĕн **политикăллă итогĕсем** кăтартса параççĕ, мĕншĕн тесен вăрçă пынă вăхăтра гитлерла ушкăнăн планĕсемпе ĕмĕчĕсем пур те путланса ларчĕç, Совет Союзĕ вара пур испытанисене те тӳссе ирттерчĕ, хăйĕн оборонăллă хăватне татах та ытларах тĕреклетрĕ тата, ирĕклĕхе юратакан ытти халăхсемпе пĕрле пулса, гитлерла çарсене татăклăнах çĕмĕрсе тăкма условисем туса хучĕ.

Çакна вăрçă çулталăкĕн вăрçă тĕлĕшĕнчи итогĕсем çирĕппĕнех кăтартса параççĕ, мĕншĕн тесен Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă пынă вăхăтра Германин вăйĕсем тăтăшах чакса пыраççĕ, Совет Союзĕн тата унпа туслă государствăсен вăйĕсем вара çирĕппĕнех ӳссе пыраççĕ. Çакна Гитлерăн империалистла идеологийĕ, демагогийĕ тата суя пропаганди пĕтĕмĕшпех путланса ларни кăтартса парать. Гитлеровецсем «Европăри çĕнĕ йĕрке» çинчен, «ариецсен рассин» уйрăм миссийĕ çинчен, фашистсем культурăна, «сыхлакансем» пулса тăни çинчен шухăшласа кăларнă элексем шутланса ларчĕç. Пĕтĕм тĕнче умне фашистсем нимĕç империалисчĕсен сăнчăрти йыттисем пулса, реакционерсем тата мракобессем, ĕçхалăхĕн тăшманĕсем, вăтам ĕмĕрсенчи варварствăна илсе килекенсем, прогресс тăшманĕсем тата культурăна аркатакансем пулса тухса тăчĕç. Гитлерла Германия—çĕр чăмăрĕ çинчи халăхăн ытларах пайĕн вилĕмле тăшманĕ пулса тăчĕ. **Çакна ĕнтĕ Германи çарĕн шалти тата Европăри тылĕ пăсăлса кайма тытăнни те кăтартса парать,** мĕншĕн тесен нимĕç империализмĕ чуралантарнă, вăрçăн калама çук пысăк йывăрлăхĕсене тӳссе курнă калăхсем хушшинче тарăху тата нимĕç банкирĕсемпе плутократĕсен интересĕсемшĕн, ют интерессемшĕн пыракан вăрçа хирĕç тăрасси ӳссе пырать. Çакна ĕнтĕ, юлашкинчен, вăрçă перспективисем кăтартса параççĕ, çав перспективăсем Совет Союзĕпе Англишĕн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемшĕн ытларах та ытларах лайăхланса пыраççĕ, Германипе унăн «союзникĕсемшĕн» тата вассалĕсемшĕн ытларах та ытларах начарланса пыраççĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă çулталăкĕн политикăллă тата вăрçă тĕлĕшĕнчи итогĕсем.

СОВИНФОРМБЮРО.

Великобританин премьер-министрĕ господин Уинстон Черчилль СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин патне янă телеграмма

Совет Союзĕ вăрçăн иккĕмĕш çулталăкне кĕнĕ май, эпĕ, тепĕр темиçе уйăхран вăрçăн тăваттăмĕш çулталăкне кĕрекен Великобританин премьер-министрĕ пулса, Сире, Совет Союзĕнчи пĕрлешӳллĕ халăхсен руководительне, Сирĕн хĕçпăшаллă вăйсем, партизансен отрячĕсем тата граждăнла ĕçри рабочисем иртнĕ çулталăк хушшинче çĕнтерӳллĕн оборона туса пынă пирки эпир хавасланнине тепĕр хут палăртатăп тата ку çитĕнӳсем хыççăн çак уйăхсенчех татах та ытларах çитĕнӳсем тăвассине çирĕппĕн шанса тăнине палăртатăп. Пирĕн икĕ çĕршывăн тата ытти союзниксен кĕрешӳри союзĕ тата вĕсем çумне халĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çавтери пысăк ресурсĕсем хутшăнни пирĕн тăшмана парăнтараççех. Эпир хамăрăн алăри хатĕрсемпе пуринпе те Сире пулăшса тăрассине эсир шанма пултаратăр.

Сирĕн çине Гитлер пĕр систермесĕр тапăннăранпа çулталăк иртнĕ тĕле пирĕн икĕ çĕршывпа пирĕн халăхсем хушшинчи туслă çыхăнусем майĕпенех çирĕпленсе пычĕç. Эпир хальхи çинчен кăна мар, малашнехи çинчен те шухăшлатпăр, вара гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçăра союзлă пуласси çинчен тата пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă пирĕн договора, Молотов нумаях пулмасть Великобритание пырсан алă пуснăскере, эпĕ пĕлнĕ тăрăх, совет халăхĕ саламланă пекех, Британи халăхĕ те пĕтĕм чун-чĕререн саламларĕ. Çак договор эпир хамăрăн тăшмансене аркатса тăкассине тата вăрçă пĕтнĕ хыççăн ирĕклĕхе юратакан пур халăхсемшĕн те шанчăклă мир тăвассине ĕненсе тăма май парать.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ господин Корделл Хэлл Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патне янă телеграмма

Эпĕ Сирĕн урлă Совет Союзĕн правительствине тата халăхне эсир фашистла Германин хаяр агрессине хирĕç ăнăçлăн кĕрешнĕ пирки, çапла вара пирĕн пĕтĕмĕшлĕ тăшман хăйĕн çине ытлашши шанса пĕтĕм тĕнчене çĕнсе илме палăртса тунă плансене аркатса тăкнă май Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствипе халăхĕн ячĕпе салам яратăп. Пĕр çулталăк хушши Совет Союзĕн халăхĕ фашистла Германин çарĕсене хирĕç кăна мар, çавăн пекех тата Европăри ытти çĕршывсен, фашистсем хĕтĕртнипе ĕçлекен правительствăсемлĕ çĕршывсен çарĕсене хирĕç те кĕрешсе пычĕ. Çак кĕрешӳре Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем, пĕтĕм халăх геройла пулăшса пынипе, хăйсене тивĕçлĕ ĕçе çавтери чаплăн пурнăçа кĕртрĕç, çавăнпа вĕсене пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсем хаваслă кăмăлпа юратма тытăнчĕç тата çĕр вăтăр çул ĕлĕкрех пĕтĕм тĕнчене çĕнсе илме шутланă тепĕр çынăн планĕсене аркатса тăкнă вырăссен çарĕсемпе юнашар историри вырăна йышăнма тивĕçлĕх илчĕç.

Иртнĕ çулталăк хушшинче Америка халăхĕ, агресси ăна темиçе енчен те хăратса тăнă пулсан та, хăйĕн хĕçпăшалĕсемпе материалĕсене Совет Союзĕпе хăйĕн хушшинче уйăрса валеçнĕ. Çитес çулталăкра çав хĕçпăшалсемпе материалсене, татăклă çĕнтерӳ тăвасчченех, пирĕн заводсемпе фирмăсенчен пĕрмаях ӳсекен хисеппе ытларах илсе тăрассине палăртса план тунă.

Эпир çакна шанса тăратпăр: иккĕмĕш çулталăк çитиччен çак вăрçа кĕртсе яракансене тăна кĕртĕç, мирлĕ пурнăçа юратакан халăхсем вăйлăн кĕрешме хатĕр пулнине тата пултарнине çав вăрçа чĕртсе яракансем мĕн чухлĕ хакласа çитерменнине ăнлантарĕç, кĕрешĕве çĕкленнĕ тĕнчере агрессорсем хăйсем кӳнĕ асапсемпе ишĕлтерӳсемшĕн ответ тытассинчен пăрăнма пултараяс çуккине туйса илĕç.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсен начальство составне орденсемпе наградăласси çинчен

Правительство хушнипе инçете кайса килес вĕçеве пурнăçа кĕртнĕ чухне хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн наградăлас:

Ленин орденĕпе

1. Инженер-капитана Семен Николаевич **Дмитриева.**
2. Инженер-капитана Александр Яковлевич **Золотарева.**
3. Капитана Василий Михайлович **Обухова.**

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе

1. Лейтенанта Иван Петрович **Гончарова.**
2. Старши сержанта Дмитрий Михайлович **Кожина.**
3. Сергей Корнеевич **Муханова.**

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе

1. Старши сержанта Георгий Федорович **Белоусова.**
2. 1-мĕш рангри воентехника Борис Павлович **Низовцева.**
3. Старши сержанта Павел Викторович **Сальникова.**
4. Сержанта Владимир Иванович **Смирнова.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнĕн 20-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн начальство составне орденсемпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн наградăлас:

Ленин орденĕпе

1. Ефрейтора Федор Константинович **Вострикова.**
2. Кĕçĕн сержанта Павел Васильевич **Старкова.**
3. Старши батальоннăй комиссара Василий Трофимович **Швеца.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти июнĕн 20-мĕш.

Хĕрлĕ Çарăн Сывлăш-Çар вăйĕсен начальство тата рядовой составне орденсемпе медальсем парса наградăлани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе — дивизионнăй комиссара **Л. Г. Руденкăна** тата инженер-полковника **Н. М. Степанова;**

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — лейтенанта **В. А. Александрова,** старши лейтенанта **П. А. Артюхова,** лейтенанта **А. А. Бабича,** лейтенанта **В. А. Балакина,** старши лейтенанта **А. И. Берещанские,** бригаднăй комиссара **А. П. Грубича,** старши лейтенанта **К. С. Данилкина,** капитана **В. И. Демидова,** капитана **П. Т. Жидкова,** лейтенанта **Г. А. Иванева,** лейтенанта **Г. З. Курочкина,** старши лейтенанта **К. Н. Либина,** старши лейтенанта **К. В. Мантурева,** лейтенанта **Ф. И. Пономарева,** старши лейтенанта **А. Ф. Попова,** полковника **В. П. Пошехонцева,** подполковника **П. М. Садова,** лейтенанта **С. В. Сальникова,** капитана **Е. А. Смирнова,** полковника **В. И. Сталина,** капитана **И. В. Суворова,** 1-мĕш рангри воентехника **А. Г. Филипчука,** старши лейтенанта **И. М. Юликова,** старши лейтенанта **П. Ф. Якименкăна,** старши лейтенанта **В. Ф. Ястребова;**

ХĔРЛĔ ÇĂЛТĂР орденĕпе — 106 çынна;

«ЗА ОТВАГУ» медальпе — 10 çынна;

ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе— 57 çынна наградăланă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июнĕн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Харьков енче противникăн наступлени туса пыракан войскисене хирĕç çапăçнă.

Фронтăн Севастополь участокĕнче вăйлă çапăçусем малалла пулса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пăлтă улшăнусемех пулман.

* * *

Июнĕн 21-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 танкне, войскăсемпе груçсем тиртерса пыракан 100 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 15 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, зенитнăй тата полевой артиллерин 10 батарейине пусарнă, противникăн пехотине 3 ротăна çити саланлаcа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Харьков енчи участоксенчен пĕринче Кочупал командир пулса ертсе пыракан пирĕн боецсем противник пехотин атакине сирсе пăрахнă. Нимĕçсене хăвалаcа янă, вĕсен çапăçу хирне 200 виле выртса юлнă. Тепĕр участокра Котов юлташăн подразделенийĕ халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ. Çак çапăçура минометчик Лершин хăйне палăртнă. Вăл противникăн станковăй пулеметне тата нимĕçсен 25 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи уйрăм участоксенче противник темиçе хутчен атака тума хăтланса пăхнă. Пăшалсемпе пулеметсенчен тата артиллерирен пенипе нимĕçсен атакисене сирсе янă. Противникăн пехотине 4 ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Серебринский юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçăн артиллерисчĕсем икĕ кун хушшинче противникăн 8 дзотне, 6 блиндажне пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине пусарнă, икĕ орудине, 4 пулеметне тата салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Снайперсем Николай Осиповпа Алексей Трибункин юлташсем гитлеровецсене 100 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Çак кунсенче Осипов юлташ, вут тивертекен пульăсемпе персе, тăшманăн боеприпассен икĕ складне вут тĕртнĕ.

* * *

В. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ, Орел облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекенскер, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене ăнăçлăн аркатать. Тулллимар хыпарсем тăрăх, партизансем ултă уйăх хушшинче аэродромсем çинче вут тивертсе янипе тата пехотăн хĕçпăшалĕсенчен персе ӳкернипе нимĕçсен 8 самолетне пĕтерсе тăкнă, противникăн çар грузĕсем тиенĕ 12 автомашинине, 18 лавне пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 7 кĕпере тата шоссе çулĕ çинчи 5 кĕпере сирпĕнтерсе аркатнă, чугунçул çинчи 5 состава ӳпĕнтерсе янă. Çав вăхăт хушшинчех нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 300 çынна пĕтерсе тăкнă тата 190 çынна аманттнă.

* * *

Смоленск облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче çапăçакан партизансен отрячĕсенчен пĕрин группи противникăн докуменчĕсен сыххине тытса илнĕ. Çав документсем хушшинче Рославль хулинчи нимĕç гарнизонĕн начальникĕн майор Кайзерăн приказне тупнă. Хăраса ӳкнĕ майор çав приказра юлашки вăхăтра çарпа фронтăл тылри районĕсенче партизансем час-часах тапăнни çинчен тата пĕр нимĕçте хăйне хăрушсăрлăхра тесе шутлама пултараймани çинчен çырса пĕлтерет. Приказра çапла каланă: «çар группи çапăçакан районри кашни салтакăнах кĕтмен çĕртен тапăннинчен сыхланма кирек-хăш минутăра та хатĕр пулас пулать. Колоннăсен, чугунçул транспорчĕсен, специальнăй командăсен т. ыт. начальникĕсен куçса пынă, каннă тата çĕр каçма вырнаçнă вăхăтра хăйсен чаçĕ сыхланма хатĕррине тĕрĕслес пулать».

* * *

Нимĕçсен 113-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Рудольф Ланге çапла каласа панă: «Эпĕ нумаях пулмасть Берлинран килтĕм. Çав пысăк хулара Хĕвелтухăçĕнчи фронтра хăйсен тăванĕсенчен кама та пулин çухатман çемье тупма йывăр. Эпĕ пĕлекен Нейгаузен çемьинче 4 ывăл пулнă. Вĕсенчен иккĕшне вĕлернĕ, виççĕмĕш урасăр тăрса юлнă, тăваттăмĕшĕ йывăр аманнă. Фронтра çухатусем пысăк пулнă пирки тата апат-çимĕç тупас тĕлĕшпе пысăк йывăрлăхсем пур пирки вăрçа тăрăхни ӳсет. Ирхине Берлинри кӳмесемпе çуртсен стенисем çинче хĕрлĕ краскăпа: «Тĕрĕслĕхсĕр вăрçă тĕп пултăр!», «Гитлер тĕп пултăр!» —тесе çырнă лозунгсене эпĕ пĕр хут кăна мар курнă. Полицейскисен ушкăнĕсем çав лозунгсене çуса ярас тесе кӳмесемпе çуртсен стенисем патĕнче нумайччен тăрмашаççĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем хăйсем тытса илнĕ çĕршывсен халăхĕсене вĕлерсе пĕтереççĕ. Новисад хулинче (Югославия) темиçе пин çынна, вăл шутра хĕрарăмсемпе ачасене нумай персе вĕлернĕ. Оккупантсем хресченсенчен мĕнпур апат-çимĕçе йăлтах туртса илнĕ те вĕсене выçлăхпа вилсе пĕтесси патне çитернĕ.

Июнĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июнĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Севастополь участокĕнче тăшманăн 50 автоматчикĕ пирĕн темиçе краснофлотеца çавăрса илнĕ пулнă. Хăюллă боецсем 36 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă та çапăçса тăшман ункине татса тухнă. Снайпер-краснофлотец Хлюнов юлташ тăшман орудийĕн расчетне стройран кăларнă тата противникăн 80 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Корнейчук краснофлотец автоматран персе нимĕçсен 50 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть, сасартăк пырса çапса, нимĕçсене вĕсем йышăнса тăракан позицисенчен хĕссе кăларнă. Штыкпа тăрса çапăçса пирĕн боецсем 250 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: оруди, 2 станковăй пулемет, 3 миномет, автоматсемпе винтовкăсем нумай. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Старши лейтенант Фисунăн батарейи ((Калинин фрончĕ) нимĕçсен пехотин атакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 100 çынна яхăн вилсе выртса юлнă.

* * *

Орел партизанĕсен Х. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ хăй çапăçнă вăхăт хушшинче нимĕçсен 11 танкĕпе танкеткине, 110 автомашинине, 5 орудине, 3 тракторпа тягачне, 2 мотоциклне тата 21 лавне пĕтерсе тăкнă. Партизансем нимĕçсен 2 çар эшелонне ӳпĕнтернĕ, чугунçул çинчи 5 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата продовольствипе боеприпассен темиçе складне çунтарса янă. Совет патриочĕсем 9 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç çапăçса, партизансем хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Ленинград партизанĕсем противникăн чугунçул составне ӳпĕнтерсе янă. Çавăнта груз тиенĕ 4 вагона, горючи тултарнă 2 цистернăна, автомашинăсем тиенĕ 6 платформăна пĕтерсе тăкнă, 50 гитлеровец ытла вилсе тата аманса пĕтнĕ.

* * *

Венгерсен 6-мĕш бригадин транспортнăй ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Николае Борш çапла каласа панă: «Эпĕ румын, Венгрия оккупациленĕ Трансильванире пурăнаканскер. Февраль уйăхĕнче мана Венгри çарне мобилизацилерĕç. Пирĕн ротăра 18 румын пурччĕ. Венгерсем пирĕнтен тем тĕрлĕ те мăшкăлатчĕç, эпир венгерла калаçма пĕлменнишĕн пире хĕнетчĕç. Эпир, румынсем, хăш чухне пĕрле пухăнаттăмăр та вăрçă çинчен калаçаттăмăр. Салтаксем çапла калатчĕç: «Мĕншĕн пирĕн вырăссемпе вăрçмалла? Пирĕн тăшмансем — нимĕçсемпе венгерсем. Нимĕçсем пирĕн Трансильванине Венгри аллине тытса пачĕç тата румынсене хĕсеççĕ. Венгерсемпе нимĕçсем вырăссене çарататççĕ, çавăн пекех вĕсем румынсене те çаратаççĕ».

Апрель уйăхĕнче пирĕн бригадăна партизансене хирĕç кĕрешме вырăс фронтне ячĕç. Пĕр ялтан инçех мар партизансем пирĕн обоз çине тапăнчĕç. Нумай салтаксене вĕлерсе пĕтерчĕç, ыттисем тарса пĕтрĕç. Мана партизансем тыткăна илчĕç».

* * *

Аяларахра Ленинград облаçĕн нимĕçсем тытса илнĕ Патрово ялĕнчи колхозница Мария Елкина каласа панине пичетлетпĕр: «Июнĕн 5-мĕшĕнче мана староста чĕнсе илчĕ те нимĕçсен комендатурине пыма хушрĕ. Çав кунах каçхине 7 сехетре эпĕ комендатурăна пытăм. Ман ята çырчĕç те амбара тĕртсе кĕртсе ячĕç, унта 35 хĕр ларатчĕ. Питĕрнĕ амбарта эпир 5 талăк ларса ирттертĕмĕр. Кунне пĕрре пире çĕршер грамм çăкăр тата ушкăнĕпе пĕр витре вĕри шыв паратчĕç. Июнĕн 10-мĕшĕнче ирхине 9 сехетре пире уçланкăна илсе тухрĕç. Çавăнта 15 çултан пуçласа 25 çула çитиччен хĕрсене татах 115 çынна хуралпа илсе пычĕç. Нимĕçсем пурне те çарамасланма хушрĕç. Унтан çар тухтăрĕ пире пĕр рете тăратрĕ те салтаксем умĕнчех пăхма тытăнчĕ. Çакăн пек мăшкăл темиçе сехете пычĕ. Унтан врач пире Германие намăс çуртне ăсатасси çинчен пĕлтерчĕ. Хĕрсем пурте макăрса çапла калама тытăнчĕç: «Антив пире вĕлерччĕр, анчах эпир çапах та унта каймастпăр», терĕç. Эпĕ тата тепĕр 4 колхозница фашистсен тыткăнĕнчен тарса тухма тата совет войскисем вырнаçнă çĕре çитме пултартăмăр».

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XI-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн

ÇЕМЕРЛЕ. (Хамăр корр. телефонпа). Июнĕн 22-мĕшĕнче партин районри активĕн пухăвĕ пулчĕ. ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XI-мĕш пленумĕн итогĕсем çинчен парти райкомĕн секретарĕ Вахнин юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик тата пренире тухса калакансем çакна палăртрĕç: районри ĕççыннисем, Совет Союзĕнчи ытти халăхсем пекех, хăйсен мĕнпур ĕçне фронт ыйтăвĕсене пурне те çителĕклĕ парса тăрас шухăшпа туса пыраççĕ. Районри колхозсем çурхи тĕштырăсене 8 кун хушшинче акса пĕтернĕ. Планран ирттерсе 1000 гектар ытла акса хăварнă. Оборона фондне пама тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи халăха пулăшма ятарласах 89 гектар акнă. Пур колхозсем те ака планĕсене ирттерсе тултарнă. Уйрăмах «Комбайн», «Большевик», «Çамрăк вăй» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем çуракинче аван ĕçленĕ, тĕштырăсене 6—7 кун хушшинче акса пĕтернĕ.

Çум çумлас ĕçе колхозсем организованно туса пыраççĕ. Анчах уйрăм колхозсенче, сăмахран, «Октябрь революцийĕ 14 çул тултарни» ятлă колхозра çум çумлассине малтанхи хут питех те çиелтен тунă, куракăсене татса тухнă çеç, çавна пула тепĕр икĕ-виçĕ кунранах çумсем ашкăнса кайнă. Уборкăна хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсем çинчен ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн политсектор начальникĕ В. Чернов юлташ уйрăмах палăртса каларĕ. Комбайнсене, жнейкăсене уборкăна тухма хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлени çук. Çĕртме сухине тăвасси те вăрахăн пулса пырать.

Промышленность предприятийĕсем юлашки вăхăтра хăйсен ĕçĕсене чылаях лайăхлатнă. Заводсенче, промысла артелĕсенче социализмлă ăмăрту анлă сарăлнă. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, комбинат коллективĕ май уйăхĕнче производство программине ирттерсе тултарнă. Унта стахановецсен йышĕ ӳссех пырать. Ĕç нормисене икĕ хут, виçĕ хут тата ытларах та ирттерсе тултаракансем нумайланаççĕ. Çакă вăл—рабочисем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе анлăн туса пынинчен килет. Кашни цехрах вуншар агитаторсем массăллă ăнлантару ĕçне туса пыраççĕ, стена хаçачĕсем тухса тăраççĕ, кăтарту хăмисем пур.

Çакăнпа пĕрлех уйрăм предприятисем паянхи куна та хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетсе çитереймен. Сăмахран, вырăнти промышленноçăн комбиначĕпе апат-çимĕç комбиначĕ иккĕшĕ те кăçалхи пилĕк уйăхри плансене тултарман. «Труженник» артельри пуçламĕш парторганизаципе унăн секретарĕ Герасимов юлташ производствăра ĕç мĕнле пынипе сахал интересленнĕ. Унта ĕç дисциплинине пăснисем чылай пулкаланă, оборудованипе çителĕклĕ таран усă курмаççĕ. Пуçламĕш парторганизаци социализмлă ăмăртăва вăйлатас тĕлĕшпе сахал ĕçленĕ. Юлашки вăхăтра кăна Герасимов юлташ производствăри ĕçсем çине ытларах çаврăнса пăхма пуçланă.

Парти активĕн районри пухăвĕ ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XI-мĕш пленумĕн решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртрĕ. Предприятисен программисене тултарма, уборкăна хатĕрленме тата государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртме ĕççынни массисене организацилес, партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕпе пуçламĕш парторганизацисен ытларах ĕçлес пулать.

Ăмăртса ĕçленин результачĕсем

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи коммунистсем, комсомолецсем тата мĕнпур ĕççыннисем Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ çине производствăра нихăçанхинчен вăйлăрах ĕçленипе ответлеççĕ. Совет Союзĕнчи малта пыракан предприятисемпе колхозсен примерĕ тăрăх пирĕн районра та социализмлă ăмăртса ĕçлесси анлăн сарăлса пырать.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, судоверфьри рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем ĕç нормисене ирттерсе тултарма, материалсене тата хутмалли япаласене 10 процент перекетлеме, çамрăк арçынсемпе хĕрарăмсенчен ăста рабочисем хатĕрлеме обязательство илчĕç.

Завод коллективĕн ĕçĕсем сăмахĕсенчен уйăралмаççĕ, вăл хăй шантарса каланине, панă сăмаха пурнăçа кĕртсе пырать. Унта 19 фронтовой бригада тунă. Челиверов, Сивов, Воинов платниксен бригади кашни кунах нормăна 150 процент, Краличкин ертсе пыракан тимĕрçĕсен бригади — 140 процент, Смирнов ертсе пыракан конопатчиксен бригади — 145 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. Социализмлă ăмăртса ĕçлесси анлă сарăлнине пула судоверфь май уйăхĕнчи плана ирттерсе пурнăçа кĕртрĕ.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, «Портной» артелĕн членĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулчĕç. Çĕвĕ çĕлекен цехсенче ĕçлекенсем кашни уйăхрах производство планне 120 процент тултарма, çывăх вăхăтрах 15 мастер çĕнĕрен вĕрентсе хатĕрлеме обязательство илчĕç. Унтанпа вĕсем 6 çынна мастер пулса ĕçлеме вĕрентсе çитернĕ. Артельре 2 фронтовой бригада ĕçлет. Жбанкина бригади май уйăхĕнчи плана 114 процент пурнăçа кĕртрĕ. ВКП(б) членĕ Сорокина юлташăн бригади нормăна 145 процент тултарса ĕçлет. Артель май уйăхĕнче васкавлă заказсем тăрăх плана 158 процент, куллен кирлĕ таварсем енĕпе 102 процент пурнăçларĕ.

«Кузнец» артельри тата промкомбинатри тимĕрçĕсем Куданов, Офицеров, 60 çулхи Красильников, Шевнин, Камбулов юлташсем май уйăхĕнче заданисене 300-шер процент тултарнă.

Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕпе хавхаланнă ĕççыннисем пĕтĕм вăй-хала хурса ĕçлеççĕ. Районри предприятисемпе мастерскойсем пурте фронта кирлĕ япаласене туса кăларма тытăнчĕç. Рабочисем кунран кунах ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыраççĕ.

Совет Союзĕ Великобританипе договор, США-па килĕшӳ туни çине ответлесе, ĕççыннисем предприятисемпе колхозсенче тата тимлĕрех ĕçлесе пыма сăмах параççĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăçа кĕртессишĕн пыракан кĕрешӳ вăйлансах пырать.

Н. БОРЗОВ.
ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕн секретарĕ.

ССР Союзĕпе Великобритани хушшинчи союз ячĕпе пулнă митингра Криппс тухса калани

ЛОНДОН, июнĕн 21-мĕш. (ТАСС). Ĕнер Лондонра ССР Союзĕпе Великобритани хушшинче союз тунă ятпа пысăк демонстраци тата митинг пулса иртнĕ.

Англи правительстви тата çар кабинечĕн представителĕ пулса митингра Стаффорд Криппс тухса сăмах каланă.

Криппс çакна палăртнă: Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă договор тĕнчери историре питех те паллă вырăн йышăнса тăракан иккĕмĕш событи пулса тăрать, ăна эпир паянхи демонстрацире паллă тăватпăр, тенĕ.

«Эпир пĕр-пĕринчен питех те инçетре пурăнатпăр пулин те, Англипе Совет Союзĕн çарĕсем пĕр шухăш-кăмăлпа, пĕр паттăрлăхпа хавхаланнă. Çав паттăрлăха Англин салтакĕсемпе летчикĕсем — хĕвеланăçĕнчи пушхирте, Хĕрлĕ Çар — Харьковпа Севастополь патĕнче кăтартса параççĕ», тенĕ Криппс.

Криппс малалла çапла каланă: «Халĕ питĕ пире вăрçăра Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем туллин пулăшса пыраççĕ. Вĕсен пулăшăвĕ кунран кун ӳссе, ăнăçлăрах пулса пырать. Пирĕн хыçра тăракан индустриллĕ вăй-хăвата шута илсен, тата çав вăй-хăвата хамăрăн производствăллă ресурссемпе пĕтĕçтерсе пырсан, паллах, юлашкинчен никам çĕнтерейми вăй пулса тăрать. Часах вăхăт çитĕ, эпир çав вăйхăват çине тайăнса, Гитлера хĕвеланăçĕнчен хăватлăн та ăнăçлăн атакăлăпăр. Эпир хамăрăн союзниксене пама пултаракан пулăшу пирĕн ĕç ăнăçлăн пулсан кăна вырăнлă пулĕ. Ĕç ăнăçсăр пулни пирĕн пĕрлĕхлĕ ĕçе пулăшма мар, пăсма кăна пултарĕ. Çапас пулсан, мĕнпур вăй-хăватпа тата чарăнса тăричченех Берлина çитме хатĕр тăрса çапмалла. Çак вăхăт хăçан çитесси çинчен эпĕ калама пултараймастăп. Эпĕ çавăн çинчен сире е Гитлера пĕлтерсе ăна пулăшма шутламастăп. Çак самант вăл кăшт маларах е кăшт каярах пулма пултарать, паллах, Гитлер хăйне часах пырса çапасси çинчен тавçăрать пулмалла ĕнтĕ. Эпир çав ĕçе тума хатĕрленетпĕр пулсан, паллах, иккĕленӳ пулма пултараймасть, Гитлер та хатĕрленме хăтланĕ; çакă вăл хăй енчен вăхăта та кистет. Эсир пĕлетĕр, çак ыйтăва г. Молотовпа, вăл Англире пулнă чухне, сӳтсе явнă, эпĕ вара хам енчен шантарсах сире çапла калама пултаратăп: Молотов çак ыйту çинчен эпĕ сире пĕлтерме пултарнинчен чылай ытларах пĕлет».

— Великобританипе ССР Союзĕнчи халăхсем,—тенĕ юлашкинчен Криппс—Европа пичĕ çинчен фашизмăн ылчăкне шăлса пăрахас çирĕп шухăшпа пĕрле малалла кайĕç.

Мальта гарнизонĕ Севастополе хӳтĕлекенсене саламлани

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Мальта губернаторĕ лорд Горт Севастополе хӳтĕлекенсем патне послани янă. Унта вăл Мальта гарнизонĕпе Мальта утравĕ çинче пурăнакан граждăнла халăх «Севастополе çавтери чаплăн хӳтĕленипе» тĕлĕнсе саваннине çинчен каласа парать. «Хулана хӳтĕлекенсем тăшмана паракан отпор Севастополĕн историллĕ ячĕ çумне çĕнĕ чап хушать», тенĕ посланире.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ТАПĂНĂВĕСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: июнĕн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле, Англи истребителĕсем противникăн 3 тральщикне Бельги çыранĕсем патĕнче сиенленĕ. Унсăр пуçне тăшманăн 4 истребительне пĕтерсе тăкнă.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 20-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи самолечĕсем Париж — Камбре чугунçулĕ çинчи тавар станцийĕ çине тата чугунçул узелĕ çине бомбăсем пăрахнă.

—0—

Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă договор çинчен чăвашла брошюра тухать

Чăваш АССР Государство Издательстви çак кунсенче чăвашла тата вырăсла «Англипе Совет Союзĕ хушшинче 1942 çулти майăн 26-мĕшĕнче тунă договора ратификацилени» ятлă брошюра кăларать.

Брошюрăна Молотов юлташ СССР Верховный Советĕнче Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă договора ратификацилесси çинчен тунă доклад, Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă договорăн текстĕ тата СССР Верховный Совечĕ Англипе Совет Союзĕ хушшинче тунă договора ратификацилесси çинчен йышăннă постановлени кĕрет.

ХРОНИКА

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ И. П. Гвоздарев юлташа РСФСР Строительнăй материалсен промышленноçĕн Халăх Комиссарĕн обязанноçĕнчен хăтарнă.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ И. Л. Митраков юлташа РСФСР Строительнăй материалсен промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартнă.

Ответлă редакторшăн А. А. ЭСХЕЛЬ.

В. ДОЛГОВ

Çурхи калавсем

1. Анчар

«...Окончательно, с корнем, вырвать фашистское дерево с его отравленными плодами».

М. Литвинов.

Çуркунне...

Эпир вăрçакан фронтра кассерен вĕтĕ çумăр çăвать, вăрмансем, ялсем, уйхирсем çине кăвак тĕтре пырса витĕнет, хăш чухне вара ирхине катаран-катаран сарă хĕвел пăхать те юр таппах та васкаса ирĕлме тытăнать.

Çак çурхи кунсенче, шурăмпуç килнĕ чухне, сар çу пек сар хĕвел чăмăртанса тухнă вăхăтра,—Волков вăрманĕсенче, çĕрпӳртре, эпир, анчах ывăнса килнине пăхмасăрах, вырăссен чаплă писателĕсемпе поэчĕсем çинчен кĕскенкĕскен сăмах ваклама пуçларăмăр.

—Фашистсем пирĕн ял çине бомбăсем пăрахма тытăнчĕç. Çынсем пӳртçуртсенчен тухса блиндажсене кĕрсе пытанчĕç. Манăн килĕм çунать. Эпĕ хамăн япаласенчен нимĕн те илейменрĕм. Пĕтĕмпе те пĕр япала çеç илсе тухрăм...—тет манăн фронтри çывăх юлташăм политрук Д-н.

* * *

— Мĕн?—ыйтрăмăр эпир темиçен.

Политрук, пĕр сăмах шарламасăр, шинельне илчĕ те кĕсйинчен пĕр пĕчĕк кĕнеке туртса кăларчĕ. Сăвă кĕнеки! Пушкин сăввисен кĕнеки вăл.

— Итлĕр! — терĕ те вăл тӳрех А. С. Пушкинăн «Анчар» ятлă сăввине вулама тытăнчĕ, хуллен-хуллен пуçларĕ те янравлă сассине майĕпен хăпартса пычĕ.

Наркăмăш шывĕ юхтарса ларакан йывăç çинчен çырнă ку сăвăра. Анчар—вăл наркăмăш йывăççи...

«А царь тем ядом напитал
Свои послушливые стрелы,
И с ними гибель разослал
К соседям в чуждые пределы»—

вĕçленчĕ паллă поэтăн чаплă сăвви.

...Унччен те пулмарĕ, урса кайнă фашистсем пирĕн еннелле минăсем пăрахма тытăнчĕç, вĕçĕмсĕр те йĕркесĕр пеме пуçларĕç.

— Хирĕç тавăрас вĕсене!—терĕ политрук.

Пирĕн хĕрлĕ воинсем вара, вут пек хĕрсе, хавтăрланса, фашистсене хирĕç тухрĕç...

Йĕри-тавра вăрçă кĕрлесе тăрать. Шăнкăртатса, шăхăрса çур иртет...

Вулаканăм, ырă юлташăм, эсĕ тахçанах «Анчар» сăвва вуланă пулĕ. Эпĕ те ăна çамрăкрах чухне вуланăччĕ. Халĕ, вăл сăвва тепĕр хут тинкерсе итленĕ хыççăн, манăн пуçăма çĕнĕ шухăшсем пырса кĕчĕç.

— Мĕн пек çав анчар?
— Кам пек çав патша?

2. Вăрманти юрă

«Что ж, бывает страшновато,
Да врагу в сто раз страшней»

А. Твардовский.

Волхов юханшывĕн тăрăхĕ. Хĕвел анса ларас вăхăт. Вăрманта çурхи нӳрĕ татах та вăйлăн сисĕнет. Вăхăтран-вăхăта йăваш çил вĕрсе илет.

Хăйсен симĕс тумĕпе мухтанса ларакан чăрăшсемпе хырсем пĕр вырăна хупласах илнĕ. Вĕсем хушшинче питех те хӳтĕ, тӳлек...

Политрукпа старшина çакăнта ĕнтĕ грузовик пырса лартнă. Грузовика çурри таран витсе тăракан чăрăш тураттисем хысĕнчен тухса, çамрăк артистка, Нина Петрова, эпир юратакан юрра купăс çеммипе юрласа парать.

... И кто его знает
Чего он моргает...

Купăс çеммипе çамрăк артисткăн юрри сасси красноармеецсен хăлхисене йăвашшăн пырса кĕрет. Ачашлать. Кăмăлĕсене киллентерет. Артисткăн мамăк пек çемçе, юр пек таса, çил пек çăмăл сассине çурхи вăрман та савăнса итлет. Тин çеç çеçкене ларма тытăннă шурă-шурă хурăнсем çамрăк хĕрĕн юррине хуллен-хуллен тайăнса тимлеççĕ. Симĕс чатăрпа витĕнсе ларнă хыр-чăрăшсем, уртăш йывăççисем, пĕтĕм йĕпписене тăратса, пĕлĕтелле пăхса илеççĕ.

Инçе те мар, уçланкă çуммĕн, ăмăртса, тавлашса, çичçырма юхать, кĕмĕл саспа çич юрă юрласа, пирĕн хитре пикепе ăмăртать.

Анчах çак кĕмĕл сас Нинăн сассине çитеймест, çитеймест вăл Нинăн уçă кăмăлне... Çичçырма шывĕн сасси кĕмĕл пулсан, çамрăк хĕрĕн сасси ылттăн, çӳçĕсем унăн пурçăн-ука, куçĕсем—кĕмĕшке шăрçа, пичĕ—çырла-панулми...

Эх, хитре-çке, эх, паха-çке унăн юрри!

Çак вăхăтра, атсемĕр, таçта, çӳлте тӳпере, пĕлĕт татăкĕсем хушшинче, «Юнкерс—88» кĕрлерĕ, кĕмсĕртетрĕ, унтан симĕс вăрман çинелле çăхан пек ярăнчĕ...

Пирĕн Нина (кăшт хăрарĕ!) çухалса каймарĕ, пăртак çеç сассине улăштарчĕ те (ку чухне унăн сасси татах та илемлĕн илтĕнчĕ):

И кто его знает,
Чего он летает,—тесе юрласа ячĕ. Нинăпа пĕрле çĕр сас юрларĕ, чăрăш вăрманĕ ал çупрĕ, вĕтĕ-вĕтĕ хурăнсем, ăвăссем ташларĕç.

Çар çыннисем çухалса каймарĕç: пĕр самантра, пĕр харăс пăшалсене çĕклерĕç те çăхан çине тĕллерĕç. Вĕçĕмсĕр янрарĕç пăшалсем, такăртатса юрларĕç пулеметсем.

Вилĕм кайăкĕ пĕлĕтре тайкаланчĕ, сулланчĕ, хура тĕтĕмĕн мăкăрланса, хăрăм пулса, кутăн-пуçăн çаврăнайрĕ, унтан чăмайрĕ мур çăви патнелле,—кĕрĕслетрĕ те ваккăн-ваккăн вакланса, çĕр татăк пулса кĕрсе выртайрĕ çăва тĕпне!..

* * *

— «Чего он летает...»—çак юрă халĕ те пирĕн хăлхара, çамрăк пике пирĕн умра.

Эх, хитре мĕн вăрманти юрă! Ни шăпчăк мар, ни чепчем мар пирĕн Нина,—çапах та, çапах та хитре унăн юрри!..

3. Шăпчăк сасси

«Ах, песня, песня, что можешь
ты сделать с серцем человека»

Д. Фурманов.

Пĕррехинче, çуркуннехи ăшă каçхине, шурăмпуç килнĕ вăхăтра, нимĕçсем, урнă кашкăрсем пек уласа, пирĕн çинелле вут-хĕм сирпĕтме тытăнчĕç.

Тупă-пăшал сасси пĕр вĕçĕмсĕр кĕрлесе тăрать. Пулеметсем такăртатса пуля тăкаççĕ. Минăсем сĕмсĕррĕн шăхăрса килеççĕ те пирĕн патрах, пирĕн хыçра е умра, ухлатса çурăлаççĕ...

Анчах эпир те хăраса тăмарăмăр: арăслан пек чăрсăрланса, тигр пек хаярланса-хавтăрланса, çапăçма тытăнтăмăр.

Пăшалсем, тупăсем, минометсем çĕр чĕтретсе-çĕмĕрсе тăшман çине тимĕртăмăр, вут-хурçă тăкаççĕ. Çакна пула вăрман пин урапаллă аслати пек хаяррăн кĕрлесе тăрать, пин-пин саслăн янрать, улать, шав шавлать,—тĕнче кашти хуçалнă пек туйăнать.

Акă тата пирĕн çĕнĕ тупă пĕрре çеç, пĕр ăстрăм кăна хăйĕн юррине юрласа илчĕ,— кĕл пулса вĕçрĕç фашистсем!..

Çакăн хыççăн пĕр самантлăха пирĕннисем те, тăшмансем те, никам чармасăрах, хăйсем тĕллĕнех, шăпланчĕç,—тĕнчере никам та çук пек туйăнса кайрĕ...

Эх, атсемĕр, шăпах çак самантра инçе те мар, пирĕн умрах, халĕ çеç вăрçă хаяррăн кĕрленĕ вырăнта, темĕнле майпа тытăнса юлнă пĕр çеçкеллĕ лутра çĕмĕрт çинче шăпчăк сасси, шăпчăк юрри илтĕнсе кайрĕ.

Кĕмĕл саслă, ылттăн саслă шăпчăк, юрла, юрла, юрруна, шăрантар!..

Вăрçăра хытнă чун-чĕреллĕ юлташсем лаштах сывларĕç те тем пек тĕлĕнчĕç. Чăтаймарăмăр, эпир те юрă юрласа ятăмăр:

Эх, бей винтовка,
Метко, ловко
Беспощадно по врагу!
Я тебе, моя винтовка,
Острой саблей помогу!

(Малалли пулать).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕ ФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0--85, издательство конторин — 0—23.

НТ 1275 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64